Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчеппе тухать

101-102 (7632-7633) №№ ✻ Шăмат кун, 2008 çулхи декабрĕн (раштав) 13-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Раççейре

## Ӳсĕр водительсене ытларах айăплаççĕ

РФ Патшалăх Думи Уголовнăй кодексăн 264 статйине улшăнусем кĕртесси пирки пĕрремĕш вулавпа сасăларĕ. Сăмах çул-йĕр правилисене пăсни йывăр инкексем патне илсе пыни пирки пырать.

Урă водитель çул-йĕр правилисене пăснă пирки çын йывăр амансан ăна 2 çул таран хупма пултараççĕ. Ӳсĕр водителе 3 çул параççĕ. Урă водитель тимсĕрлĕхне пула аварире çын вилсен, водителе 5 çул таран айăплаççĕ. Ӳсĕррине – 7 çул. Аварире икĕ е ытларах çын вилсен урă водителе 7 çул таран, ӳсĕррине 9 çуллăха хупаççĕ.

Республикăра

## «Шупашкар калаçать...»

ЧР Правительстви «Чăваш Ен наци радионе туса хурасси çинчен» йышăну кăларнă. ЧР культура министрĕ Р.М. Лизакова пĕлтернĕ тăрăх, паян пралуклă радио сасси хăш-пĕр çĕре кăна çитет. Наци радионе туса хуни çак çитменлĕхрен тĕпрен хăтăлма, халăха тăван чĕлхепе информаци парса тăрасине тĕпрен лайăхлатма, халăхăн информаци илсе тăмалли Конституци правине пĕтĕмпех сыхласа хăварма пулăшмалла.

Çĕнĕ радио 2009 çулхи 2-мĕш кварталта хăйĕн сассине памалла. Передачĕсен 60 процентĕ чăвашла, 35 проценчĕ вырăсла, 5 проценчĕ тутарла тухмалла. Çĕнĕ радиора информацианалитика 60 процент, кĕвĕ-юрă, çавăн пекех ача-пăча передачисем 40 процент пулĕç. Кăларăмсем ирхине 6 сехетрен каçхи 10 сехетчен пырĕç. Эфира «Нива» радиона явăçтарма шутлаççĕ, вăл ял çыннисем валли лайăх передачăсем хатĕрлет.

Районти хастар çамрăксем



## Тăрăшуллă специалист

***Наталия Юрьевна Бирюкова Муркаш почтамтĕнче оператор пулса виççĕмĕш çул ĕçлет. Етĕрне тата Муркаш районĕсенчи почта уйрăмĕсене тĕрлĕрен конвертсемпе маркăсем, открыткăсем уйăрса парать. Ĕç илемпе тата çав вăхăтрах çынсене усă тăвассипе çыхăннине питĕ килĕштерет çамрăк специалист. Çавăнпах хăйĕн ĕçне юратса пурнăçлать. Коллективра та тăрăшуллăхпа палăрать. Почтамтра ĕçленипе пĕрлех Наталия Юрьевна Чăваш патшалăх университетĕнче кусăмсăр майпа экономика факультетĕнче вĕренет. Çитес çул вара алла диплом та илĕ.***

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

Декабрĕн 12-мĕшĕ – РФ Конституцийĕн кунĕ

## Демократи аталанăвĕн тĕп никĕсĕ

15 çул ĕнтĕ пирĕн çĕр-шыв 1993 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнчи референдумпа йышăннă Раççей Федерацийĕн Конституцийĕн нормисене тĕпе хурса пурăнать. 90-мĕш çулсен вĕçĕнче Раççей Конституцийĕ сахалтан та икĕ политика кризисне лекнĕ, апла пулин те вĕсене тивĕçлипе чăтса иртнĕ. Конституцисем унччен те пулнă. РСФСР Конституцине пĕрремĕш хут 1918 çулта, иккĕмĕшне – СССР Конституцине – 1924 çулта, кайран 1936 çулта йышăннă. 1977 çулта йышăннă Конституци «пĕр вырăнта тăнă тапхăр Конституцийĕ» ятпа паллă. Вăл Совет Союзĕ саланса кайиччченех вăйра пулнă.

Раççей Федерацийĕн хальхи Конституцине референдумпа 1993 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнче йышăннă. Сасăлава 58 миллион та 187 пин те 755 çынлавçă хутшăннă е регистрациленĕ суйлавçăсен 54,8 проценчĕ. Конституцие йышăнассишĕн суйлава хутшăннисен 58,4 проценчĕ сасăланă. 1993 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнче вăл вăя кĕнĕ. Ун хыççăнхи вăхăт Раççей патшалăхĕн историйĕн пахалăхлă çĕнĕ тапхăрĕ пулса тăрать.

Паянхи Конституци – Раççей патшалăхĕн демократи аталанăвĕн тĕп никĕсĕ. Вăл çĕр-шыври пĕтĕм право системин шăнăрĕ пулса тăрать, йышăнакан ытти саккунсен содержанийĕпе тытăмĕ унпа тачă çыхăннă.

Конституци федераллă законодательствăшăн кăна мар, Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен законодательствисемшĕн те çирĕп никĕс пулса тăчĕ. Ăна йышăннă май Раççей регионĕсенче те хăйсен право бази йĕркелеме тытăнчĕ.

Район 65 çул тултарнă май

## Юбилей ячĕпе кĕнеке тухать

Район администрацийĕн пуçлăхĕ район 65 çул тултарнине уявласси çинчен йышăну тунă. Çак ятпа чылай ĕç туса ирттерме палăртнă.

Çав шутра район юбилейне халалласа «Моргаушский район: история в лицах» кĕнеке кăларма йышăннă. Кĕçнерн кун кĕнеке хатĕрлессипе ĕçлекен редакци канашĕн ларăвĕ пулнă. Ăна район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ертсе пынă. Сăмах кунта кĕнеке концепцийĕ пирки пынă.

Ку ĕçе район çыннисем те пултарнă таран хутшăнма пултараççĕ. Сирĕн сĕнӳсене тата материалсене райадминистрацин культура пайĕнче йышăнаççĕ.

Çамрăк çемьесене валли

## Çĕнĕ çул парни

Патшалăх Канашĕн анчахрах иртнĕ сессийĕнче республика бюджетне улшăнусем кĕртсе «Çамрăк çемье» программăна финанслама тата 94 миллион тенкĕ уйăрнă.

Пирĕн района вара 718 пин те 700 тенкĕ килнĕ. Бюджет укçи-тенкине куçарас ĕç декабрĕн 15-мĕшĕнче вĕçленет. Çавăнпа хватер илес текенсен самаях хыпкаланма тивет. Район администрацийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, 4 çамрăк çемье документсене хатĕрлесе панă.

Финанс кризисĕн йывăрлăхĕсене тата банксем кредит парасшăнах маррине шута илсен, çак парне çамрăк çемьесене самаях савăнтармалла. Çĕнĕ çул умĕн çакăн йышши парнесем йышăнма уйрăмах кăмăллă.

**Хамăр инф.**

Купăста уявне йыхравлаççĕ

## Эсир купăста йӳçĕтме пĕлетĕр-и?

Хамăр туса илнĕ çимĕçрен пахи çук. Анчах туса илнĕ пахча çимĕçе, улма-çырлана тирпейлеме те пĕлмелле. Ăна нумай вăхăт упрама пултармалла. Çавăн пекех çимĕçри витаминсене те сыхласа хăвармалла. Ку енĕпе аслисен опытне çухатмалла мар, малалла аталантармалла.

Çак тĕллевпе Куславкка хула тăрăхĕнче купăста йӳçĕтме пĕлекенсен конкурсне ирттереççĕ. Унта пурте хутшăнма пултараççĕ. Пĕр литр банкипе хăвăр нумайлăха упрама йӳçĕтнĕ купăстана илсе пымалла çеç.

Конкурс виçинче купăста уявне йĕркелеççĕ. Кунта туса илнĕ купăстасăр пуçне унран хатĕрленĕ тĕрлĕ апат-çимĕçе тăратма юрать.

Çĕнтерӳçĕсене 3, 5, 7 пин тенкĕ кĕтет.

Конкурс декабрĕн 18-мĕшĕнче Куславккари культурăпа кану центрĕнче 11 сехетре пуçланать. Тел. 8(83534)2-18-36.

Вăрнарта çĕр улми уявне ирттересси йăлана кĕрсе пырать. Эпир, Муркашсем, мĕнпе тĕлĕнтерме пултаратпăр?!

**Хамăр инф.**

Вырăнти самоуправлени ыйтăвĕсемпе

# Икĕ еншĕн те усăллă тĕл пулусем

***Чулхула облаçĕнчи Спасски район делегацийĕ Муркашра пулчĕ***

***Юлашки вăхăтра вырăнсенчи ял тăрăхĕсен ĕçĕхĕлĕнче палăрăмлă улшăнусем сахал мар пулса иртрĕç. Чи малтанах вĕсем Раççей Федерацийĕн 2003 çулхи октябрĕн 6-мĕшĕнче йышăннă «Вырăнти самоуправление йĕркелесси çинчен» 131-ФЗ Федераллă саккунпа çыхăннă. Вырăнсенчи пĕлтерĕшлĕ, ял çыннисен пурнăçĕпе çыхăннă кулленхи ыйтусене халĕ ял тăрăхĕсен хăйсенех татса пама тивет. Муркашсем епле йĕркеленĕ-ха çак ĕçе? Пĕчĕкрех ял тăрăхĕсене пĕр-пĕринпе пĕрлештерессине мĕнле туса ирттернĕ? Усси пур-и, мĕн парать çакă? Çак тата ытти ыйтусем канăç памарĕç хăнасене. Чулхула облаçĕнчи Спасски районĕн 10 çынран тăракан делегацийĕн шутĕнче вара асăннă район пуçлăхĕ В.Ю. Евдокимов, унăн çумĕ В.В. Афиногенов, хăш-пĕр ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, «Власть Советов» пĕрлешӳллĕ хуçалăх ертӳçи А.В. Поваров, райадминистрацин ответлă ĕçченĕсем пулчĕç.***



Пĕрле пулнă чухне канашламалли çук мар.

Делегаци членĕсем малтанах район администрацийĕн ларусен пĕчĕк залĕнче район пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа тĕл пулчĕç. Унта çавăн пекех район администрацийĕн финанс пайĕн пуçлăхĕ Р.И. Ананьева, йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ Л.Ю. Тарасова, информацие тивĕçтерессин пайĕн пуçлăхĕ В.Г. Лаврентьев хутшăнчĕç. Юрий Александрович районăн иртнĕ вунпĕр уйăхри экономикăпа социаллă аталанăвĕн кăтартăвĕсем çинче чарăнса тăчĕ, Л.Ю. Тарасова вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлес, Р.И. Ананьева финанс, В.Г. Лаврентьев районти информатизаци ыйтăвĕсене хускатрĕç.

Делегаци Уйкас Янасал, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕсенче пулса курчĕ, администрацисен, вырăнсенчи вĕрентӳпе культура учрежденийĕсен ĕçĕсемпе паллашрĕ. Хăнасене уйрăмах шкулсене, Культура çуртне, библиотекăсене пĕр тытăма пĕрлештерес практика кăмăла кайрĕ. Çакă культурăпа вĕрентӳ ĕçне-хĕлне комплекслă, шайлашуллă туса пыма май панипе пĕрлех укçа-тенкĕ те сахал мар перекетлеме май парать. Ку вара хальхи вăхăтра пĕлтерĕшсĕр мар.

Акă Уйкас Янасал ял тăрăхĕн территорийĕнчи Сосновкăри вĕрентӳпе культура центрнех илер. Шкул çулне çитмен ачасен ушкăнĕ те, вĕрентӳ класĕсем те, Культура çурчĕ те, ял тата шкул библиотекисене пĕрлештерсе районта пĕрремĕш йĕркеленĕ тĕслĕх библиотека та пĕр çуртрах вырнаçнă. Ятарлă кабинетсем те, столовăй та, информатика класĕ те, спортзал та пур. Библиотекăна çӳрекенсем Интернета тухма, кирлĕ информацие илме пултарни çĕнĕлĕх мар ĕнтĕ. Халĕ кунта пысăк хăвăртлăхлă программăсем вырнаçтарассипе ĕçлесçĕ. Çак тăрăхра çуралса ӳснĕ чăвашсен пĕрремĕш профессорĕ, этнографĕ, фольклорисчĕ, чăвашсен пĕрремĕш хаçатне «Хыпара» никĕсленĕ Н.В. Никольский çуралнăранпа 120 çул çитнĕ тĕле 1998 çулта вĕрентӳпе культура центрĕнче ун ячĕпе музей уçнă. Унти экспонатсемпе те паллашма кăсăклă пулчĕ. Кунти актовăй залра шкул ачисем тĕрлĕрен пысăк мероприятисем ирттереççĕ пулсан, каçсерен вăл ялти çамрăксен кану вырăнĕ пулса тăрать. Дискотекăсене çӳрекенсем сахал мар.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

Çуралнă кун

## Саламлатпăр



Юратнă мăшăра, аннене, асаннене, пирĕн çывăх çыннăмăра – Муркашра пурăнакан **Елена Поликарповна ИВАНОВАНА** сумлă юбилей ячĕпе чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Вăрăм кун-çул, тулли телей, çирĕп сывлăх сунатпăр. Нумай çул çемйӳне, тăванусемпе савăнса пурăнмалла пултăр.

Хаклăран та хаклă аннемĕр, мăшăрăм! Эс пуррипе савăнатпăр. Хамăра çав тери телейлĕ туятпăр. Тайма пуç сана пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕ, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕ, чи çывăх тăванĕсем.**

Хаклăран та хаклă пирĕн чи çывăх çынна – Оринин ялĕнче пурăнакан **Ритта Евгениевна ГОРШКОВАНА** паян 55 çул тултарнă ятпа ăшă та çепĕç сăмахсемпе саламлатпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн, ывăр чухне пирĕн чун ыратăвне хăвăн чĕрӳ витĕр кăларнăшăн, пире юратса çитĕнтерсе тĕрĕс çул çине тăратнăшăн. Юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, лăпкă пурнăç сунатпăр. Тайма пуç сана пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕпе кĕрӳшĕ, 2 ывăлĕпе кинĕсем тата мăнукĕсем.**

Пирĕн хаклăран та хаклă çыннăмăр, мăшăр, анне, асанне – Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Раиса Ильинична ТИМОФЕЕВА** çак кунсенче хăйĕн юбилейне паллă тăвать. 30 çул ĕнтĕ вăл Муркашри васкавлă пулăшу уйрăмĕнче ырми-канми тăрăшать. Ял-йышра та хисепре. Юбилей ячĕпе саламланă май эпир ăна вăрăм ĕмĕр, çирĕп сывлăх, ихсĕлми телей, ăнăçу сунатпăр. Малашне те пире татах нумай-нумай çул савăнтарса пурăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсем, ывăлĕсем, кĕрӳвĕ, Денис мăнукĕ, тăванĕсем.**